Николай Евстафьев

* * *

Хăрушă вăрçă – пысăк ту пек,
Курмастпăр урлă пĕр-пĕрне.
Тен, Бременра сана эп тупăп
Тесеттĕм савнă пикене.

Хаярлăхпа тулса кĕреттĕм
Çапăçуран çапăçăва.
Тен, Берлинра тĕл пулăп теттĕм
Эп ытарми юратăва.

Çур тĕнчене иртрĕмĕр мар-и?
Çуран эп çитрĕм Дрездена.
Анчах ниçта та май пулмарĕ
Курмашкăн, ылтăнăм, сана.

Çапла, иртсеттĕмĕр Берлинăн
Урамĕ тăрăх та эпир:
Вăл тĕксĕм-тĕксĕмччĕ, йӳç хина
Хыптарнă çын пекчĕ çав ир.

Çĕнтертĕмĕр! Тăшман путланчĕ!..
Вара эс çеçчĕ тĕлĕкре;
Ĕлĕкхинчен те вăйлăланчĕ
Хĕрӳллĕ туйăм чĕремре.

Салют! –
Кĕрлерĕ пин-пин тупă.
Ман шанчăк пулчĕ умăмра:
Чун савнă тусăма эп тупрăм
Пĕртен-пĕр хамăр Çĕршывра.

*1945*

*Евстафьев, Н. «Хăрушă вăрçă – пысăк ту пек....» : [сăвă] / Николай Евстафьев // Паттăрлăх кунĕсем. – Шупашкар, 1995. – С. 47.*